21-16
2441
96.

Р. Х. С. К. Р.

Пĕтĕм тĕнчери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

Лашман Ҫтаппанĕ.

# „Хура ҫăхансем"

пĕр пайлă револютсиллĕ пиессă.



Чувашское Отделение Государств. Издательства.
Казанское Под-отделение.

Хусан, 1921 ҫул.

2ая Госуд. типо-литография тир. 2000 экз. г.К

Çыраканран:

Çак „Хура çăхансем" ятлă пїессăн сюжетне вырăсла „Осиное гнездо" ятлă пїессăран илнĕ.

Лашман Çтаппанĕ.

Р.В.Ц. Казань 2.000 экз.

## Вылакансем:

1. Накайкин - йанрал, шурисен пуçлăхĕ, хайар çын, 50 çула йахăн, сăпса.
2. Шкурă - полковник, 40 çула йахăн.
3. Пыстрох - поручăк, йанралăн атйутантĕ, 25 çулта, „пустуй" çын.
4. Петрох - тешурнăй ахвитсер.
5. Порис Николайăч - йанралăн ывăлĕ, 24 çулта, ахвитсер, ашшĕне йуратмаст.
6. Олка Петровна - милосерти йамăкĕ, 25 çула йахăн.
7. Мокутнови - хресчен картăкĕ, 30 çулта.
8. Накорнăй - хĕрлĕ салтаксен пуçлăхĕ.
9. Йăванох - салтак.
10. 3 хĕрлĕ салтак.
11. 2 комунис.

В-т-с-в-н-ă: Кулак çуртĕ Пысăк пулĕм. 2 алăк. 2 сĕтел. Тенкелсем. Тиван.

П-е-т-р-о-х,- (утколаса çÿрет). 10 сехет. Канцеларине халĕ те никам та килеймест, ахăр ĕнер вăйлă сыпнă курнĕ. Полковник хваттерĕнче кадхине ÿсĕр сасăсем илтĕнеттĕç. Сывăраççĕ курнĕ. Эй, Йăванох!

Йă-в-а-н-о-х,- (кĕрет те) Мĕн кирлĕ, Ваше Плахороти?

П-е-т-р-о-х,- Мĕн кирлĕ? Сăмавир хатĕр-и?

Й-ă-в-а-н-о-х,- Хатĕр, Ваше Плахороти.

Пе-т-р-о-х,- Илсе кĕр те çакăнта ларт, ăстакжансене авантарах тасат. Кай.

(Йăванох тухса кайат, пăртак тăрсан сăмаварне илсе кĕрсе лартат, унтан ăстаканĕсене).

Пет-р-о-х,- Халĕ тухса кай, антах тадта тухса ан çÿре. Шырамалла ан пултăр.

Й-ă-в-а-н-о-х,- Йурĕ, Ваше Плахороти! (тухса кайат).

П-е-т-р-о-х,- (Утколаса çÿрет). Йулашки вăхăтра хĕрлисем лăпкă тăраççĕ-ха. Ку мĕне пĕлтерет-ши? Ку вăхăттчен пĕр вирăнта 2 кун ытла тăнине астумастăп та, йе хĕрлисем пире хăвалаттĕç,

йе епир вӗсене. Кунта ӗнтӗ 2 ерне ыт-
лашшипех тӑраттпӑр. Капла пулсан
пӑнтӑхса кӑмпаслансах кайӑн. вӑй, Йӑванох!

Й-ӑ-в-а-н-о-х,- (кӗрет). Мӗн кирлӗ Ваше Пла-
хоротҫи?

П-е-т-р-о-х,- Пакетсене илсе килмерӗҫ-и-ха?

Й-ӑ-в-а-н-о-х,- Тежурнӑй писсӑр патӗнҫе вӗсем.

П-е-т-р-о-х,- Илсе кил кунта, кам сире унта
пама хушрӗ. Ну, ҫасрах, хыпалан.

Й-ӑ-в-а-н-о-х,- (тухса кайат те, пакеҫӗсе-
не илсе кӗрсе парат). Акӑ Ваше Плахоротҫи!

П-е-т-р-о-х,- Игрӗ, тухса кай. (Пакеҫӗсене
пӑсат те вулама тытӑнат). Вулат: Хӗр-
лисем пӗр вырӑнтах лӑпкӑ тӑраҫҫӗ. Рас-
ветҫиксем пӗлтернипе вӗсем пире ат-
таклама хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсен 6 тупӑ, 20
пулемет. Утлӑ ҫар ҫук. Салтакӗсем вӗсен
пит йапӑжнӑ. Мӗн пурӗ 500 салтак. Пи-
рӗн йекҫен хӗрлисен йенне иртнӗ та-
лӑкра 10 салтак тарҫӗҫ. Пӗр вырӑнта
тӑни пире усӑ памаст, ҫакӑн пирки уй-
рӑм прикас кӑлармалла. Кунта шеллесе
тӑраси ҫук. 23-мӗш полкӑн командирӗ
Хухс.- (Пӑртак шухӑшласа тӑрат)...
Апла иккен. Тараҫҫӗ. Ай, шуйттансем.
Ҫирӗп алӑра тытсан та тарма шӑтӑк

тупаççĕ. Ку ĕçе пĕтерес пулат, каплах тара пуçласан, пире сыхлакан та, пирĕнчĕн çапăçакан та пулмĕ. Паллă вырăна кăсене хурас, кун пирки калаçмалла пулат-ха. (Паккетçĕсене урăх сĕтел çине хурат. Унтан сăмаварĕ патне пырса ăстаккане тултарат те ларат, çикар туртса йарат. Пĕр тĕнкесĕр ларат. Унтан шухăша кайса хăйне хăй калаçма тытăнат). Вăхăт иртет. Епĕ Накайккин йанралăн отретне кĕнчи çур çул тулĕç ĕнтĕ. Кивĕ йĕркесемшĕн полшевиксемпе çапăçса, епĕ хамăн кăмăлла йăпатасшăн. Канаш Раççейĕнчи пурнăçа астăвлатăп та, тата хытăрах полшевиксемпе кĕрешес килет. Тĕнтçе кулли, мĕнле-ха вăл апла, халтçен пулман йĕркесене вĕсем тăваççĕ. Пире, ахвитсерсене кил вырăнне те хураççĕ. Вĕлĕк пирĕн алăра пулнăскерсем, халĕ çарусăр салтаксем, чест памаççĕ, пиртен кулса, пакунсене çĕвеççĕ. Мĕнле-ха кăна тӳсес? Çавăнпа епĕ Канаш Раççейĕнтçен тарса, çапла Накайккин отретне çырăнтăм. Халĕ епир вĕсене кăтартăпăр пиртен кулма! Çук, ĕнтĕ. Малашне епир Раççейе полшевиксентçен тасатсан, ак çапла тытăпăр

хура халăха. (Аллисемпе ţăлăмăртаса кă-
тартитĕ). Ирĕксем хамăр аллăмăртах пу-
лĕç. Пирĕн, Накайккин йанрал вăл йенţен
нумайах ирхăшлаçа тăмĕ. Вăл ĕçе сал-
такла тăват. Пĕрре, иккĕ, тейĕ те, ĕç
пулсах тăрĕ. Çавăнпа унтан халăх хă-
раса тăрат те. Мĕн калаççине пурне çе
пĕр сăмахсăрах тăват. Апла капла ка-
лаçса тăрасси çук. Унăн йаţĕ полшевик-
сен хăлхисене çурат, вĕсем Накайккин
пират тесенех кайалла ţакаççĕ. На-
кайккин йанрал пĕр полшевике те ил-
лемен халиţţен, вăл вĕсене пурне те леш
тĕнţене йарса пынă. (Алăка шаккани
илтĕнет, порутţăк Пистроф кĕрет).

П-ы-с-т-р-о-х,- Сывă-и порутţăк, вăхăта мĕн-
ле иртеретĕн, хĕрлисем мĕнле?

П-е-т-р-о-х,- Сывă-ха, порутţăк, ху мĕнле?
Хĕрлисем лăпкă-та-ха, антţах хăтĕр-
ленеççĕ курнат. Ав сĕтел çинţе пакет-
сем, вуласа пăх, курăн.

П-ы-с-т-р-о-х,- (Вулат). Апла, апла... Кăна
йанрала пĕлтерес. Вуларăна есĕ? тăраç-
çĕ тесс сырат.

П-е-т-р-о-х,- Вуларăм. Вĕсĕ кун пирки йанрала
токлат ту, вăл ăна ţас пĕтерĕ.

Я-и-с-т-р-о-х,- Тăвас, тăвас. (Пакетçĕсене хурать те:) ну, поручçăк, ĕнер вăхăта çпен иртертĕмĕр. Каçпа пуçласа, çутăлиççенех полковник хваттерĕнçе картла вылярăмăр. Пĕтĕм укçана çавăнта хăвартăм, çитменнине ылтăн сехетпе портсигара та выляса йатăм. Кайран ерех ĕçрĕмĕр. Апту-ха есĕ, саккăрăн 17 путтылкă ĕçсе йатăмăр. Анçах хĕрсем çукки ĕçе пăсса тăçĕ, ташлама никампа та пулмарĕ. Çак шуйтан йаввинçе пĕр путлĕ хĕр-арăм та çук. Манах пек пурăнатăн. Мĕнле, поручçăк тĕрĕс-и?

Я-с-т-р-о-х,- Тĕрĕс пулмасăр. Хĕр-арăм йенçен кунта çăнах та йапăх. Ав, епир илнĕ йулашки хулара вĕсем нумай-ççĕ. Пĕрре епĕ...

Я-н-с-т-р-о-х,- Тим-ха, тим-ха, мана итле, епĕ пĕр паллă каçа астуса илтĕм. Вăл ĕç епир илнĕ хулара пулçĕ. Çĕр улпучĕсем ахвицерсене числаса пал турĕç. Çав палра епĕ 5 хĕрпе паллашса, вĕсене ăсран шалт йатăм. Уйрăм пӳлĕме илсе кайса епĕ вĕсене парăнтартăм. Ха-ха, ха-ха (кулать). Пĕри халĕ те ăсран

каймаст. Тата пĕр çултан харăс пилĕк
аçан ашшĕ пулмалла. Хи-ха-ха-ха. (Кулаç).

П-е-т-р-о-х,- Çапла, çапла калама та çук.
епĕ хам та çав хуларах икĕ хуçа хĕре-
сене алла илнĕ-тутĕ. Хамăн хыçран вара
йăтă пек çупаттĕç. Йăпатса вĕсенçен
епĕ темĕн çухлĕ укçа пухнă. Çитменни-
не качинчи кун вĕсен ашшĕсем патне апаç-
ланма кайаттăм.

П-ы-с-т-р-о-х,-(Аван тарах сĕтел хушшине ла-
рать). Иртрĕ çав, пурнăç. Халĕ подштаипе
апла мар çав. Енер сыпăмăç та, пайан
пуç ыратать, ав; аçа-ха порушçăк сы-
пăр. (Кăсийинчен пуштылккине туртса
кăларать). Ей, Йăванох!

Й-ă-в-а-н-о-х,- Мĕн кирлĕ Ваше Плахоротçи?

П-ы-с-т-р-о-х,- Тупса кил-ха çĕркесем,
тата сăмавара пăртак ăшăт, аттуç
вăл шăнса ларнă.

Й-ă-в-а-н-о-х,- Иурĕ Ваше Плахоротçи, ха-
лех. (Сăмаварне илсе тухать).

П-ы-с-т-р-о-х,- Кунсăрăн пуçне кунта йапăх-
малла. (Ĕрене кăтартать). Ку, çутти пул-
масан, пирĕн савăнăçлă кунсем сахал
пулмалла.

Йăв-а-н-о-х,- (Çĕркисене кĕрсе ларать).

Акă Ваше Палахоротзи. (Тухса кайса сăмаварне илсе кĕрет.)

П-ы-с-т-р-о-х,- Йурĕ. Хай халĕ. (Йав. тухат.)

Ну, порутзăк, ĕçер. (Тултарат). Пăхса тăрса ĕç тухмĕ, шалт ту!

П-е-т-р-о-х,- Тим-ха, порутзăк епĕ слушпăра, тешурнăй, ĕçме мана йурамаст.

П-ы-с-т-р-о-х,- Йурамаст, кулса калатăн-и, йункĕр мар вĕтĕ, пăртак вăл йурат.

П-е-т-р-о-х,- Санран тас хăтăлайлăн, ĕçес пулат. Сирĕн сывлăхшăн! (Ĕçет.)

П-ы-с-т-р-о-х,- Калаçса тăрат, тахçанах çаплала тумалла.

(Икĕшĕ те çăрткаласçĕ, тей ĕçеççĕ, çак вăхăтра алăка шаккани илтĕнет).

П-ы-с-т-р-о-х,- Кĕрĕр. Питĕрмен унта. (Йанрал ывăлĕ Порис Николайăт кĕрет). А, Порис Николайăт, нумайтзен епир сире курман-тзĕ. Сывă-и, мĕнле çÿретĕр? (Аллине тытат. Пор. Ник. йĕрĕнне пек çавăрăнса тăрат. Тешурнăй ахвитсер пăртак ури çинтзе тăрат те хăй вырăнне ларат). Ларăр сĕтел хушшине. Кил пăртак ереже тутанса пăх, пит аван йышши. Порис Николайăт мĕнле-ха есир сиввĕн пăхса тăратăр, капла есир пи-

ре те шăнтса ĭлрĕр.

Я-о-р. Ник.- Сыввă. Вĕсир слушпăра та аптрамастăр иккен. Капла пурăнсан, ĕмĕр иртиине те сисеймĕн. Кашни кун ерехпе карт сĕрĕмĕ сире савăнăç пекки парат. Вĕçĕ çакăнта ларам-ха. Пăртак канас.

Я-ы-с-т-р-о-х,- Мĕн аптăрамалли пур? Ĕçме пур тухне ĕçес пулат, ав ĕнер полковник хваттерĕнте саккăрăн - 17 путылккă ерех ĕçсе иатăмăр, вăхăта пит тăраплă иртерттĕмĕр. Хваттерте ларса кĕтесрен кĕтессе уткаласа çӳрени мар, унтан пăртак аванторах.

Я-о-р. Н-и-к.,- Çитĕ, порутăк Ыстрох, епĕ сире ăнланатăп. Вĕсир иксĕмĕр пĕр çулпа кайаймастпăр. Пирĕн шухăшсем урăхла. Санпăн пурăнăçра, ерех, карт, аскăн хĕрсем, укçа хаклă. Манпăн, çакăн пек çынсем усăр харамсем. Вĕсем етемлĕхе кирлĕ мар. Вĕсене ĕçлеме вĕрентмелле, çĕкĕрен ишкулсенте вĕрентмелле.

Я-ы-с-т-р-о-х,- Ха-ха-ха-ха (кулат). Мĕн каласат Борис Николайăч, тăстан етемлĕхе, уссăр харамсене туртса кăларттă. Кулмалла санран Бор. Ник-ч. çакăн пек епĕ пĕр вĕрентекене астăватăп-ха, вăл

вара сан пекех етемлĕх, ăслăлăх, халăхсен
малашнехи пурнăçĕ çинчен калаçатчĕ. Кул-
тарса пĕтерет-тĕ, хăйне комунис-анархис
тет-тчĕ, есĕ те Пор. Ник. çавăн пекех етем-
лĕх çинчен калаçатăн. Çук, Пор. Ник. есĕ шут
тăвиччен, лар та, ĕçмех тытăн.

П-о-р. Н-и-к. — Порутчĕк Пыстрох епĕ пĕр кулма-
çăр калаçатăп. Сире те шăл йĕрме ча-
рăнма ыйтатăп. Епĕ сире тата та ка-
ласа парăп. Халĕ есир польшевиксемпе ça-
пăçатăр, ыйтатăп сиртен — мĕншĕн? Хă-
вăр та пĕлместĕр. Хăшĕ монархишĕн çапă-
çатпăр тетĕр, хăшĕ кăна йышăнмастăр,
хăшĕ тата Утретилккă тăвасшăн тă-
рăшатăр. Çапăçмалли итейăсем çук. Ман
шухăшпа кунта вăрă-хурахсен ушкăнĕ-
сем кăна ĕçсĕр, ĕлĕк халăх йунне ĕçсе тă-
раканçем кăна кунта пухăннă. Ĕç ха-
лăхне çаратса лайăх пурăнас тесе çак
шуррисем çар пухнă. Хрестенсене вĕсем ул-
таласа суйа хыпарсемпе йăпатса ты-
таççĕ. Илер, сирех — порутчĕк Пыстроф, пĕле-
тĕр-и есир мĕншĕн польшевиксемпе кĕреш-
нине, çук, есир пĕлместĕр. Ах, порутчĕк Пет-
рох та калаймаст. (Петрох сиксе тăрса,
калаçасшăн). Чим-ха, епĕ пĕтерем. Çавăнпа,

шуррисем саланмалла. Польшевиксем ҫӗнте-
рӗҫ, епӗ каларӑм.

П-е-т-р-о-х,- Пор. Ник. есир йанрал ывӑлӗ пулсан та, епӗ сире кунта тӗрӗс сӑмахсем каласшӑн. Есир польшевикла шухӑшлатӑр, каласни те ҫавах. Ҫавӑнпа пирӗн сирӗнпе сӑмах ваклаа тӑрасси ҫук. Мӗншӗн ҫапӑҫнине ӑҫунтан ыйтӑр, вӑл каласа парӗ. Сыва пулӑр! (Тухса кайат).

П-ы-с-т-р-о-х,- Поруҫӑк Петрох, Пор. Ник. кулса каласат, ӑна ан итле, тӑр-ха пӑртах. Пор. Ник. ахалех есир поруҫӑка ҫилентертӗр. Санӑн сӑмаххусем унӑн кӑмӑлне каймассӗ. Тӑнар та есир Пор. Ник. урӑхланса кайнӑ, сире палламалли те ҫук. Ахӑр есир сывмар курнӗ. Ӗлӗк есир капла мар-тӳҫӗ.

П-о-р. Н-и-к.,- Йалан ӗлӗкхи пекех пулсан, ҫын нимле те ҫураласт. Пурнӑҫа кура епӗ тӗрӗслӗхе тухлама пултаратӑп. Ҫавӑнпа епӗ тӗрӗслӗх польшевиксен йенче тетӗп. Шухӑшсем ман ӗлӗкхи пек мар, епӗ нумай улшӑнтӑм. Манӑн атте, Накайӗкин йанрал, мӗншӗн кӗремши те, куҫа нумай ӳсрӗ. Унӑн „тӗрӗслӗхӗ" пӑшалпа саламат вӗҫӗнче. Вӑл ӗҫ-хаяӑхне пусмӑрласа унӑн-

йунне ĕçет. Револютси панӑ ирĕксене вӑл урине тантат. Вӑл ĕçлекенсен ĕçĕсне кӑна мар, шухăшĕсене те пĕме тӑрасшӑн. Комунисла шухӑшсене вӑл пĕтересшĕн. Полшевик тесĕнех вара вӑл ҫӑтайма-сӑр хуралса кайит.

П-ы-с-т-р-о-х,- Кор. Ник. çитĕ-ха мана ку сӑмахсем, есĕ мана вĕсемпе полшевиксен май-лӑ тӑвассшӑн. Аҫта, лар-ха, ĕç пĕр ӑстак-кан ҫей, есĕ пӑртак лӑплӑнӑн.

К-о-р. Н-и-к.,- Тав-тӑ пуç. Халĕ кайатӑп. Сывӑ пулӑр. (Тухса кайат).

(Пыстрох путылккине шӑкап хыçне хурат).

П-ы-с-т-р-о-х,- Вĕй Йаванох - тасат сĕтел çине.

Й-ӑ-в-а-н-о-х,- Йурĕ Ване Пларорити (тасатат). Полковник килет. Халĕ алӑк умĕн-че милосерти йамӑкĕпе каласса тӑрат.

П-ы-с-т-р-о-х,- Йурĕ, йурĕ, ху ĕçне ҫасрах пĕтер. (Тепĕр сĕтел çинче хутсене май-лаштаркалат, Йаванох тухса кайат. Кĕрет полковник).

П-о-л-к-о-в.,- Сывӑ-и порутчӑк? Пуçу ыратмаст-и?

П-ы-с-т-р-о-х,- Сывӑ-ха, çамрӑк пуç ĕнерхипе кӑна вӑл ыратмалла мар. Акĕ пакет-сем килнĕ. Пирĕн салтаксем хĕрлисен-

йенне тиечдде тесе 23-мӗш полкӑн ко-
мантирӗ пӗлтерет.

П-о-л-к.,- Кӑна йанрала пӗлтермелле. При-
кас ҫырмалла пулӗ. Итле-ха порутӑк,
епӗ халӗ Олҫкӑ Петровнӑпа калаҫрам.
Вӑл мана шалт тӗлӗнтертӗ. Астӑ-
ватна ерне ытла ӗнтӗ расветкӑран
икӗ комуниса тытса килнӗ-тӗ, вӗсе-
не йанрал персе вӗлерме турӗ. Пайан
вӑл ӗҫ пулмалла. Акӑ хутӗсем те ҫа-
тӗр, антах алӑ пусман-ха. Ҫав кому-
ниссентен пӗри Олҫкӑ Петровнӑн шӑллӗ
пулат иккен. Халӗ вӑл манпа ӑна хӑ-
тарасси ҫинчен калаҫрӗ. Епӗ сӑмах па-
марӑм-ха, тепӗр сехетрен килме кала-
рӑм. Мӗн шухӑшлатӑн есӗ, порутӑк,
кала.

П-ы-с-т-р-о-х,- Олҫкӑ Петровнӑ... тим-ха... астӑ-
вам... Епӗ ӑна курнӑ та пулат пулӗ-
-ха. Ласаретра мар-и-ха ҫав. Илемлӗ
хӗр... астӑватӑп.

П-о-л-к.,- Ну, ну.

П-ы-с-т-р-о-х,-епӗ комуниссене хирӗҫ, ҫавӑнпа
кунта мин шухӑшпа тӑрӑнса тӑрас-
си ҫук, антах Олҫкӑ Петровнӑ пит ыйӑ-
тат пулсан йанралпа калаҫса пӑхма

йурат. Анчах вăл ку ĕҫре пулăшмĕ. Хĕрĕ чипер-и, полковник, тутанса пăхсан йурĕ-чĕ вĕт. Халĕ вăл сан аллунта. Виҫаткала ăна пăртак, есĕ айăплă пулас ҫук.

П-о-л-к.,- Калăн есĕ, шалаппай! сăмахусем тĕрĕс. Олкă Петровнă хыҫĕнчен епĕ ĕнтĕ ҫурҫула йахăн тупатăп, анчах ĕҫсем малалла пымаҫҫĕ. Халĕ чăнах вăл ман алăра, ҫавăнпа вăл халĕ ытла чарăнса тăмĕ.

П-ы-с-т-р-о-х.,- Полковник асту, апат ҫаварна хăйех кĕрет. (Шахканă сасă илтĕнет, Пыстрох тиван ҫине кайса ларат, полковник сĕтел хушшинче ҫӳрат, Олкă Петровнă кĕрет, кăмăлсăр).

П-о-л-к.,- Олкă Петровнă есир сехет пек аккуратнă ҫӳретĕр. Калана вăхăта ҫитрĕр. Халĕ 12 сехет, акă, (сехетне кăтартат). Ну, халĕ ĕҫ ҫинчен калаҫăпăр. Поручăк есир вăхăта тепĕр пӳлĕме тухса кайăр-ха, Олкă Петровнă мана секретсем каласшăн.

П-ы-с-т-р-о-х.,- Йурĕ, калаҫăр еппин. (Тухса кайат).

О-л-к-ă П-е-т-р.,- Тавта пуҫ сире полковник. Мĕнле-ха полковник манăн шăллăма хăтармалли майсем пур-и? Паҫăр есир ăна мана калаймарăр.

П-о-л-к.,- Олкă Петр. ĕçсем çинчен кайран калаçăпăр, малтан есир мана итлĕр-ха. Олкă Петровнă (пырса ларать çумне) епĕ сире нумай вăхăт пулать ĕнтĕ пĕлни. Çапах епĕ сирĕн çинчен шухăшласа хама çам çунтаратăп. Манăн тĕре вутпа çунать, унăн хĕл хĕмĕсем кусра выляççĕ. Епĕ сире Олкă Петровнă юрататăп. Халĕччен епĕ сире кăна калама май тупман. Халĕ епĕ хамăн юрату çинчен чĕлтерес терĕм сире. Олкă Петровнă, пуç тăман-и сана (пуç пуçма тытăнать, О. Петр. йĕрĕннипе сиксе тăрать вырăнĕнчен).

О-л-к-ă П-е-т-р.,-(хытă сасăпа). Пăрах, ан çулан йĕпе шăпа! Епĕ кунта юрату çинчен калаçма килмен, епĕ вилĕмрен хăтарасси çинчен калаçма килнĕ. (Унтан ĕçĕ полковник аллинчине астуса илет те лăпланса, çемçерех калаçма тытăнат).

П-о-л-к.,- Ай, йай, йай çиллес. Епĕ кун пеккине курман-тчĕ-ха. Асту есир ман алăра халĕ, епĕ сирĕншĕн аçа мар. Лăклан пăртак. Лар тиван çине унта канлĕрех пулĕ. (О. Петр. тиван çине ларать, полковн. тенкелпе ун çумне ларать).

О-л-к-ă П-е-т-р.,- Полковник есир мана калаçа-

рӑр, манӑн пуҫ ыратать. Ман ҫине ан ҫиленӗр, килӗшер. Ларăр ман ҫумма.

П-о-л-к.- Малтанах ҫапла пулмалла. Халӗ килӗшни пирки туп тума та йурать пулӗ. (Туп тăвать, О. Петр. тутăрпа тутисене шăлать).

О-ҫ-к-ă П-е-т-р.- Кайран, кайран полковник халӗ ӗҫе пӗтерер.

П-о-л-к.- Итлетӗп Оҫкă Петр-нă.

О-ҫ-к-ă П-е-т-р.- Полк. епӗ сире каланӑ-ччӗ шăллӑмма хăтарсан ăна нихăҫан та манмӑп тесе, есир ăна хирӗҫ ним те калаймарăр. Халӗ шухăшласа пăхăр та хăтарасси пулать-и, ҫавна калăр, манӑн чунăм шăллӑмшăн ҫунать.

П-о-л-к.- О. Петр-нă сирӗн нитни вăл пысăк ӗҫ, епӗ ăна хам ирӗкӗмпе тăваймастăп. Ун ҫинчен йанрала пӗлтермелле. Антах каллех унран ирӗке илтеймӗн. Вăл халӗччен унăн аллине лекнӗ коммуниссене пурне те пӗтернӗ, халӗ те ҫавах пулӗ.

О-ҫ-к-ă П-е-т-р.- Полк. есир ман шанчăксене татрăр-ҫке, мӗн тăвас-ха апла манăн, канашласа парăр-ха. Полковник (пысăка ларать ҫумнерех) хăтарăр ман шăллăма

йăлăнатăп сире, мĕн ыйтнă çавна илĕр. (Хыттăн сывлать).

П-о-л-к.- Кунта епĕ те шуйттан та пулăшаймĕ. Олкă Петровнă турă çырнине килĕшес пулать ĕнтĕ.

О-л-к-й П-е-т-р.,- Çук, кунта епĕ килĕшейместĕп. Вĕсене епĕ çăлăп. Епĕ ăна ĕненетĕп. Полк. пăх ман çинелле. Куратна, епĕ сана йуратататăп, унчăн есĕ ман шăллăма вилĕмрен хăтармалла. (Полк. ирĕлсе кайать).

П-о-л-к.- Олкă Петровнă тамăка мана пăрах, çакса хур, анчах вĕсем ман ирĕкре мар. Епĕ хушу тăрăх ĕçлетĕп. Вĕсем йанрал аллинче. Акă, Олкă Петровнă, епĕ сире йанрал ачи патне, Порис Николайăч патне кăтартса йарам-ха. Вăл ачишĕпе салаçса пăхсан, хăтарма та пулĕ тен.
(Сулнерех пырса аллисене тытать, курăн пăхать, йуратнине палăртать, Олкă Пет. тăрать).

О-л-к-ă П-е-т-р.,- Тавта пуç полковник кушăн, кайса тупас-ха ăна. Кайран епĕ зата килĕп кунта. Ăн çиленĕр ман çине. Сывă йулăр. (Тухса кайать. Полк. тивак çинчен хăй вырăнне пырса ларать те

хутţесене майлаштаркалат, унтан тă-рат те уткалама тытăнат, пеţţе-нех.)

П-о-л-к.,- Ах, шуйттан хĕр-арăмĕ, пĕтĕмпех парăнтарţĕ. Халĕ çавăн çинţен кăна шухăшлатăп. Пуласси манăн пулĕ-çке-ха. Пăртак кĕтес пулат. (Тупă пе-ни илтĕнет, малтан сахалтарах, ун-тан вăйлăланат. Пăртак тăрсан ţӳ-реţерен вут çулăмĕсем курăнкалаççĕ, çав вăхăтрах ţан çапма тытăнаççĕ.

П-е-т-р-о-х,- (Васкаса ţупса кĕрсе:) Хоспотин полковник, хĕрлисем аттаклама тытăн-ţĕç. Йал çунат. Пирĕн çарсем тараççĕ.

П-о-л-к.,- (Хăраса, ним тăвайимасăр). Е-е, мĕн ка-латăн-ха. Хĕрлисем аттаклаççĕ. Эпĕ хам та куратăп. Ţуп ţасрах йанрала ка-лама. Пирĕн тараççĕ те.

П-е-т-р-о-х,- Халеф. (Тухса кайат).

(Çак вăхăтра пӳлĕме Пистрох ţупса кĕрет. Тӳрех полковник патне пырса:)

П-и-с-т-р-о-х,- Ну, пĕтрĕмĕр, хосп. Полковник. Хĕрлисем пире виçĕ йенţен хупăрласа ил-ţĕç. Халĕ вĕсем йалтан инçе мар, пит вăйлă çапăçаççĕ. Пирĕн салтаксем та-раççĕ, ахăр çак йалтан тухмалла пулаţ пулĕ.

П-о-л-к-о-в.,- Тупм-ха, мана есӗ хӑратсах пӑрахрӑн. Мӗнле-ха тӑхаддӗ. Кам вӗсене тӑкма хушнӑ. Халех тӑрӑнмалла. Порутӑк, апла капла пулассине кӗтмесӗр хатӗрленер-ха тармa. Вӗй, Йаванов!

Й-ӑ-в-а-н-о-х,- Вӗӗ Ваше Плахорогзи.

П-о-л-к-о-в.,- Халех есӗ лашасене кӳл те йапаласене лавсем ҫине купала, пӗр сехетрен хатӗр пул. Илтрӗн-и? Тӑтах каламалла ан пултӑр. (Йаванох тухса кайат. Ҫав вӑхӑтра тепӗр алӑкран йанрал кӗрет, унӑн хыҫҫӑн теиҫурн. охвитсер.)

(Тӑран сасси тӑрӑна тӑрӑна илтӗнет; тупӑсем вӑйлӑ переҫҫӗ, унтан харӑс тӑрӑнаҫҫӗ те пулеметсем пени илтӗнет).

Й-а-н-р-а-л,- Полковник, хайхисене пӗтертне? Вӑрӑт.

П-о-л-к.,- Каҫпала, Ваше Превосх., вӗсене вӗлермелле тунӑ-тӑтӗ.

Й-а-н-р-а-л,- Асту, полк. ҫӑварна карса ан тӑр, вӗсен ҫине пӑрса тӑмалли ҫук. Есӗ карттӑ ҫине пӑхаларӑна? Мӗнле, сан шухӑшупа, полковник хӗрлисем пире тӑхарӗҫ-и? Парӑр-ха кунта карттӑ! (Пӑрат).

П-о-л-к.,- Нимл те халӗ калаймастӑп Ваше

Превосхот. Есир ку ҫӗҫе майлаштармасан,
Вӑшне Прев. эпир кунта пӗтмелле. Эпӗ ҫавна авӑн астуса тӑратӑп.

Й-а-н-р.- (Хайне хӑй). Шуйттансен пуҫлӑхӗ, Накорнай пит те авӑн шутланӑ аттахламалла. Вӑл пире унки ҫаварса илсшӗн иккен. Ҫук, укӑн ӗҫӗ тухмӗ, эпир унпа кӗрешсе пахӑпӑр-ха. Вӑй, порутӑк, кил ман пата. Ҫыр приказ. Итле.

(Пыстрох хут илсе пырса ҫырат).

Й-а-н-р.,- 23-мӗш полккӑн комантирне. Халех, ҫак приказа илсенех хӗрлисен ҫынне икӗ паттаҫйон пар. Тепӗр икӗ паттаҫйонпа малтан хӗрлисене тӑрантар. Пӗлтер. Тупмӑ ҫарӑн пуҫлӑхне. Халех хӗрлисен штӑпне тупӑсенте пер, йала ан шелме, ҫунтар.

21-мӗш полккӑн комантирне. Наташтино йатла йала илсе хӗрлисене сулахай енчен ҫӗмерме тытӑн. Пӗлтер. Йанрал Накайкин тесе ҫыр. - Пултӗ-и? Халех вестовойсемпе йар.

П-ы-с-т-р-о-х,- Йурӗ Вӑше Прев. халех йаратӑп. (Тухса каят).

Й-а-н-р.,- Полковник, епӗ сире темиҫе хутчен те каланӑ, шуйттан комунисӗсемпе ку-

май çтпаланса ан тăр, пĕтерех вĕсене.
Пар хутусене алла пуса парам.

П-о-л-к.;- Хутсем хатĕр, иктах Ваше Прев.-ĕ пĕ сирĕнпе пĕрне хăтарма май çук-и тесе каласа пăхасшăн-тăтĕ.

Й-а-н-р.;- Калмех, паçăр Пор. Ник. каласни çитмест-ха, ку тата ытти. Çук полк-к, ĕç тухмаст. Вĕсем вилмелле, епĕ кунтан пăрăнайман-ттăп. Епĕ [illegible] поçитсине кайăп, унтан кирлĕ вăрăта вĕсем çинчен каласмалла ан пултăр. Кӳрĕр хутусене

П-о-л-к.;- Акă Ваше Превосх.!

Й-а-н-р.;- (Çырать). Çапла кирлĕ. Пĕттĕр, шуйттансем! Пувуçка пама хушар полковник.

П-о-л-к.;- Чурĕ Ваше Прев. (Тухса кайать, йанрал карттă çинĕ пăхса тăрать. Тупăсем хаяр херае перес. Пăшал сассисем те илтĕнкелеççĕ. Тан çапни хăлхана çурать. Стена хыçĕнче чăнкăравлă пувуçка килни илтĕнет „тпру" тенĕ сасă илтĕнет. Тем. оэв. Петроф ман кĕнерентпе вырăнта силтак пек тăрать).

Й-а-н-р.;- Порутăк, илсе пар-ха шенеле. Поçитсине сайăпăр. Тырат.

(Петрох шенелле тăхăнтарат, картусне парат. Йанр. тухса кайат; ун хыçĕнтзен теш. охвитсер. Пÿлĕме çак вăхăтра Порис Николайчăпа Олькă Петровнă кĕреççĕ).

П-о-р. Н-и-к.,- Олькă Петровнă, пайан кунта каçпала хĕрлисем çитмелле. Епĕ сана ун çинтзен пĕлтерес тенĕ-тзĕ. Шăлну çинтзен хăраса ан тăр, епĕ вĕсене пурне те хăтарăп.

О-л-к-ă П-е-т-р.,- Тавта пул сире Пор. Никол. ырă сăмахсемшĕн. Манăн тĕрĕм халĕ лăплансах лартĕ. Сирĕн пек ырă çын епĕ курман-тзĕ-ха çак çăхансем хушшинтзе.

П-о-р. Н-и-к.,- Çав çăхансем Олькă Петр. пайан пĕтмелле, вĕсен йависем саланмалла. Йанрал Накайккин телейĕ пайан çухалĕ. Халĕ Олькă Петр. есир хваттере кайса пăртак лăпланăр, канăр, вăхăтĕ çитсен епĕ сире хамах пĕлтерĕп.

О-л-к-ă П-е-т-р.,- Пор. Ник. пĕртте киле кайас килмест. Манăн кунтах йулас килет.

П-о-р. Н-и-к.,- Апла пулсан манăн хваттере кайса лар. Инçе мар. Сирĕн канмалла. Атăр ăсатса йарам.

О-л-к-ă. П-е-т-р.,- Йурĕ, ăсатăр еппин. (Иккĕш те тухса кайаççĕ.)

(Тепӗр алӑкран полковник кӗрет).

П-о-л-к.,- Ах, шуйттансем, ытла та хытӑ кӳл-сӗрттеттерессӗ, ахӑр пирӗн ку йалтан тах-ламалла пулать пулӗ. Пӑшал пени те ҫы-вӑхарать. Ҫур йала ӗнтӗ вут хыпнӑ. Мӗн тӑвас-ха? Тата кунта ман пуҫ ҫинче хайхи коммунисҫем тӑрассӗ. Йанрал пӗ-терме хушрӗ. Ӑҫта-ха ҫав хутсем? (Сӗ-тел патне пырса хутӗсене шырать; ҫав вӑхӑтра Пор. Ник. кӗрет).

П-о-р. Ни-к.,- Полковник, ӑҫта йанрал? Ҫас килет-и вӑл?

П-о-л-к.,- Йанрал позитсире, тата пӗр сехет-рен вӑл таврӑнмалла. Пор. Ник., мӗншӗн хатӗрленместӗр, ку йалтан тухса кайма-лла пулать вӗт.

П-о-р. Н-и-к.,- Эпӗ нимта та тухасшӑн мар ку йалтан, сире те тухма канашламас-тӑп, мӗншӗн тесен хӗрлисем апла та кап-ла та йанрал Накайжин штабне па-йанах тыткӑна илӗҫ.

П-о-л-к.,- Пор. Ник. эсир шӑлт мана тӗлӗнте-ретӗр. Мӗншӗн-ха ҫак сӑмахсемпе пире хӑратасшӑн. Ахӑр эсир мӗн те пулсан пӗлетӗр пулӗ.

П-о-р. Н-и-к.,- Тӑнах полковник эпӗ кулмай

йапалисем пĕлетĕп. Эсĕ улталанмарăн. Каласа парам-ха епĕ сире тĕрĕссипе. Епĕ сирĕн тăшманăр, епĕ сире пурне те, хура çăхансене, хĕрлисен аллине паратăп. Епĕ коммуниссен майлă ĕçлетĕп. Ĕлĕк епĕ ăна пытарса тăнă, халĕ епĕ ăна тÿрех каламасăр пултаратăп, мĕншĕн тесен сирĕн, хура çăхансен, халĕ вăйăрсем пĕтрĕç.

Я-о-л-к.,- Пор. Ник. чарăнăр, чарăнăр, епĕ сире тăнлаймастăп. Йанрал ывăлĕ апла пулмалла мар. Çук. Епĕ ĕненместĕп.

Я-о-р. Ни-к.,- Итле полковник епĕ каласа пĕтерем халĕ. Эсир ыйтăр, мĕнле ĕлĕк пирĕнпе пĕр канашлă пулнăскер, халĕ хĕрлисен йенне çавранса ÿкнĕ. Пĕл. Пĕрре епĕ çак сурана тупсассăн разветкана кайрăм. Пĕр коммуниса тĕл пултăм. Каласа кайрăмăр. Вăл мана коммуниссем мĕншĕн кĕрешни çинчен ăнлантарса пачĕ. Кайран разветкăран таврăнсан епĕ нумайччен шухăшларăм, вара епĕ çав коммуниспа темиçе хутчен те тĕл пултăм. Вăл мана коммуниссен вĕрентĕвĕ çинчен ăнлантарат-чĕ, çаванта вара епĕ ĕç халăхне ÿкратса ăна усă парасшăн пултăм. Йанрал Накайкинпе

унӗн тарӑсен ултавне курайми пултӑм. Манӑн шухӑш: вӗсене тасрах пӗтерсе, сотсиалисӑм йӗркисем пурнӑҫа кӗртесси.

П-о-л-к., Ай-ай-ай Пор. Ник. есир тасалсаҫ кайнӑ. Сире ухмахлатнисен ҫуртне йамалла. Аду килсенех епӗ ӑна каласа парӑп. Ку сӑмахсене манас ҫук. Порушӑк халӗ епӗ сирӗнпе охвитсиалунӑ каласатӑп. Тухса кайӑр кунтан, ман тумалли ӗҫсем пур. Йанрал килсен тӗнтерӗпӗр. (Хутӗсене миӗлашттаркалама тытӑнат).

П-о-р. Н-и-к.,- Епӗ сире итлеместеп те тухмастӑп та. Есир, вилӗм хутӗсене кунта пӑхатӑр пулӗ. Ҫук, вӗсем халӗ сирӗн ирӗкертен тухрӗҫ. Есир вӗсен йунӗсене ӗҫеймӗр. Ак сирӗн хутусем. (Хутӗсене илет те ҫуркаласа парахат; полк. тӗлӗнсе хытса кайат).

П-о-л-к.,- (Хытӑ сасӑпа). Хоспотин порушӑк! Есир ухмаха тухнӑ. Епӗ сире хупатӑп. Халех йанрала раппӑрт ҫыратӑп. Халӗ ниҫта та ан тухӑр.

П-о-р. Н-и-к.,- Хосп. полковник, маншӑн ан тӑрманӑр епӗ кунтан ниҫта та кайма пултараймастӑп. Мӗн тӑвасшине епӗ халӗ турӑп. Мана вӑхӑтлӑха ҫитет.

(Утколаса ҫӳрет, полковник ҫиленсе ҫырат. Ҫав вӑхӑтра йанрал кӗрет, ун хыҫҫӗнчен тешурнӑй охвитсер. Йанрал пит ҫиленнӗ. Шенелне хывса пӑрахсат те нвӑлне тӳрет ҫапса калат:)

Й-а-н-р.,- Всё мӗн туса ҫӳретӗн-ха кунта. Эпӗ сан ҫинчен усал хыпарсем илтрӗм. Санпа ман калаҫмалла. Кайса лар ху патна.

П-о-р. Н-и-к.,- Манпа аҫа пек ан калаҫӑр йанрал Накайкин. Халӗ есир ман апте мар. Эпӗ сирӗн тӑшманӑр.

Й-а-н-р.;(Ҫиленсе хуралса кайат. Хайар сасӑпа:) Сысна, марш кунтан, халех сана хупатӑп; (Теш. охв-е:) илсе килӗр салтаксене.

П-о-л-к.,- Ваше Превосх. Вӗсем хӗрлисем майлӑ. Халӗ кӑна калаҫса кӑтартрӗ. Эпӗ вӗсене шанмастӑм-ччӗ, сывмар пулӗ тесе, анчах шанмалла пулчӗ.

Й-а-н-р.,- Ҫитӗ, ҫитӗ, полковник, епӗ халӗ пирне те пӗлсе ҫитрӗм. Эпӗ ӑна вӗрентӗп. (Теш. охв-е:) Салтаксене илме йатӑр-и? (Теш. охв. тухса кайат).

П-о-л-к.,- Ваше Превосх. Тата вӑл хайхи коммунистсен ӗҫӗсене чӗрсе тӑкрӗ.

Й-а-н-р.,- Мӗн? Чӗрсе тӑкрӗ. Чим-ха ҫепӗ ӑна чӗрӗп... Кунта хӗп-хӗрлӗ тӑвӑп. Вӗҫӗр аса-

нĕ. (Утkаласа ӳрет. Алăка шаккани тата кăшкăрса макăрни илтĕнет; алăк тăрук уçăлса каять те, Мокутнова картăк кĕрет.)

М-о-к-у-т-н-о-ва,- (тӳрех Йанр. умне ӳк. Йĕрсе:) Вашие Плахороди, ĕмĕр асăнăп, хăтар вилĕмрен ман атана. Тупăм, 70 çула çитсе ку асапа курман-тĕ. Хăтар, турăçăм, пĕртен пĕр ывăлăма. Вăл çамрăк, ним те пĕлмест. (Тешурн. охв. кĕрет).

Й-а-н-р,- (Теш. охв-е:) Порутăк, каллех сирĕн йеркесĕр ĕç. Мĕншĕн йатăр ку ăссăр картăка. Халех хăвалăр. Пайан мана канăç памарăç ĕнтĕ.

(Порутăк картăка кăларма тытăнат. Пор. Николайăт порутăка тĕртсе йарат).

П-о-р. Н-и-к.,- Ан сыпăçăр картăка! (Картăка:) Ан хăра, ывăлу сывă пулĕ. Лар çакăнта. (Лартат).

Й-а-н-р,- (Хытă сасăпа) Вкоттинă! Ху выранна пĕл. Сана шуйтана пĕтерес халех. Полковник сыхлăр ăна. Халех военнăй суппа ăна айăплăпăр. Вăл манăн ывăл пулсан та епир ăна хĕрженяпĕр.

П-о-р. Н-и-к.,- Çук, хура çăхансем айăплайшăр. Авă, илтетĕр-и çăшансем сунтаç пересçĕ. Хĕрлисем çитрĕç. Халĕ çăвăр сут умне тăрăр.

П-о-л-к-о-в-н-и-к-п-е т-е-и. о-ж-в.- (Харăс). Мĕн уна калаçса тăмалла. Вăхăтĕ пулсан-тăрĕ...

Й-а-н-р.- Апла пулин пĕт, йытă, хам аллăмранах. (Вулзĕрне калăрса пеме хатĕрленет).

П-о-р. Н-и-к.- (Аллинĕнчен вулзĕрне туртса илсе:) Йытă, ывăлу çине те аллу çĕкленет. Тăшман, епĕ сире кураймастăп. Вĕсĕ мана пĕтерейменрен пулсан, епĕ сана пĕтерĕп. (Вулзĕрпе перет. Йанр. ÿкет. Иттисем тарса тухаççĕ. Алăк патĕнчех пăшалсем пени сасăсем илтĕнеççĕ. Зĕрле салтак пăшалсемпе кереççĕ).

Х-ĕ-р. с-а-л-т.- Ăçта йанрал Накайкин? Епир ăна шыратпăр.

П-о-р. Н-и-к.- Йанрал Накайкин? Акă вăл. Пăхăр. Халăр Накорнăй йулташа йанрал Накайкина ывăле персе вĕлерĕ тесе. Тасраф йулташсам.

Хĕ-р. с-а-л-т.- Вĕсĕ кам? Ăçтан пĕлетĕр Накорнăй йулташа?

П-о-р. Н-и-к.- Пĕлет вăл. Калăр тасраф. Хăйте килет пулĕ-ха кунта. (Хĕр. салт. калаççĕ).

(Урамра шăри шăрă илтĕнет. Халăх кĕрлет. Салтаксем ревалюци йуррисем йурлаççĕ. Пупă пени илтĕнмест. Пăшал пени те айакра. Çак вăхăтра пулĕçĕ полковник, Пыстроф, Петроф

чупса кĕреççĕ те пÿлĕмре пытанас тесе. Чупса çÿреççĕ, чÿречерен чӳречене сике сике тухаççĕ. Пор. Ник. пуçне алăпа тытса пÿлĕм варринче тăрать, карчăк хăранипе хытса кайса ун çине пăхса ларать. Кĕреççĕ: малта Накорнăй, унтан мил. йăмăкĕпе шăллĕ, карчăк ачи, 3 çерле салтак).

Н-а-к-о-р-н-ă-й,- Пор. Ник. есир Револуцийĕн пысăк ĕç турăрăна ĕç халăхĕ манмĕ. Пире çак хура çăханçен йăвăçне салатма нумай тулăнтăр. (Аллине парать). Ку вилĕне кăларса утăр, пирĕн савăнăçа вăл ан хуратăр. (3 çерле салтак йăнр. виллине сĕтĕрсе тухаççĕ). Револуци вăйĕ хăйĕн тăшманĕсене халĕ пурне те пĕтерчĕ. Ĕç халăхĕ канма пултарать. Ăна çалĕ упралакансем тупăнмĕç, пулсан та вăл вĕсене шанмĕ. Канаш ирĕкĕ сывă пултăр, тĕнчери револуци сывă пултăр. Хĕрлĕ çар сывă пултăр!

(Çак вăхăтра Мокутнова карчăк ывăлне курса палласа „Ака вăл" тесе пырать те чуп тыса савăнса калаçма тытăнать).



## Пïессă умĕн калаламалли сăмах.

Ĕç халăхне авалтанпах патшасем, пупсем, çĕр улпутĕсем тĕттĕмре тытса асаплантарса пурăннă. Нарс уйăхĕнчи революци хыççăн та çавах пулма тытăннă. Анчах ĕç халăхĕ, ĕçлекенсемпе хресченсем, çавна тÿссе тăма пултарайман. Йупа уйăхĕнчи революци пуршуйсем йенне çаптаракан Керенски правителствине сирпĕтсе ывтнă. Раççейри пуршуалă партисем влаçа хăйсен аллинчен йарасшăн пулман, çавăнпа вĕсем патша тарçисене, шурă йанралсене ухçасемпе пулăшса, вĕсене ĕç халăхĕ çине йанă.

Çак „Хура çăхансем“ йатлă пïессăра ĕç халăхне пусмăрлакан йăтăсен пурăнăçне кăтартнă. Вĕсем ĕç халăхне мĕн пачине паллă тунă.

Пïессăра пуçтĕр, хайар çынсене кăтартнă. Вĕсенчен йанр. Накайккин пурнинчен те усалтарах, вăл ĕç халăхне кураймаст, коммунисене тÿсеймест. Ĕç халăхне вăл çакăпа, хĕç пăшалпа хăратса тытса тăрат. Пăлханакансене вăл çакат, йалсене çунтарат. Унăн пулăшаканнисем те çавах. Пïессăра тата пĕр ырă çын палăрат, вăл йан-

рал Накайкинӑн ывӑлӗ Порис. Малтан вӑл ыттисем пекех пулнӑ, кайран ӗҫ халӑхӗ ыйтӑвӗсене ӑнланса вӑл ун майлӑ пулса кайнӑ. Ашшӗне вӑл тӑшмана хунӑ, ӑна курайман. Пӳессӑра вӑл хӑй ашшӗне ҫиллипе персе вӗлерет.

Ҫак пӳессӑра, ҫыракан, шуррисен ирсӗр пурнӑҫне кӑтартма шутланӑ. Ҫакна кӑтартса вӑл Револютсине шурӑ тӑшмансентҫен сыхлама тҫӗнет. Револютсин Хӗрлӗ Йалавне ҫӳле ҫӗклеме хушат̆. Пурӑнӑҫра та пӳессӑри пек ан пултӑр тесен, Канаш Ирӗкне шурӑ йанралсентҫен те йут патшалӑхсентҫи капиталҫӑсентҫен те аван сыхласа тӑрас пулат̆.

Лашман Ҫт.